**Николай ГРИГОРЬЕВ,**
**Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ, Чăваш Республикин Н.Я.Бичурин ячĕллĕ преми лауреачĕ**

# Чăваш Енĕн пĕрремĕш тĕп хирургĕ



*И.М. Кузнецов*

Паянхи пекех астăватăп, Игнатий Максимович Кузнецовпа эпĕ пĕрремĕш хут шăп та лăп аллă çул каялла, 1958 çулхи авăн уйăхĕнче, тĕл пулса паллашнăччĕ. Ун чухне Хусанти медицина институтне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн мана Тăвай район больницине хирургра ĕçлеме янăччĕ. Çамрăк, юн вĕри, вăй вĕресе тăрать. Анчах ялти больница йышĕпе йĕркеллĕ паллашма та ĕлкĕреймерĕм, мана питĕ васкавлăн Шупашкара, сывлăх сыхлав министерствине, чĕнсе илчĕç.

Çав çулхине эпир мединститут пĕтерсе Чăваш Республикине пĕтĕмпе çирĕме яхăн çамрăк хирург килнĕччĕ. Сывлăх сыхлав министерствин тĕп хирургĕ Игнатий Максимович Кузнецов пирĕн, çамрăк специалистсен, район больницинче хамăр тĕллĕн ĕçлеме кирлĕ чухлĕ ăсталăх çитейменнине ăнланнă ĕнтĕ, çавăнпа пурне те пĕрле Шупашкара пухса хирурги енĕпе тăватă уйăхлăх курссенче вĕрентме шутланă. Чăн та, унăн сĕнĕвĕ пирĕншĕн питĕ илĕртӳллĕ пулчĕ, эпир унпа хаваслансах килĕшрĕмĕр. Тĕрĕссипе каласан, пирĕнтен кашниех студент чухнех хирург пулма тĕплĕн хатĕрленнĕ: ăслăлăх кружокĕсене çӳренĕ, клиникăсенчи каçхи дежурствăра пулнă, операцисем тума хутшăннă. Эпĕ хам та институтра вĕреннĕ çулсенче 100 ытла операци тума ĕлкĕрнĕччĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ кăткăс йышшисемех пулнă.

Игнатий Максимович пире Шупашкар хула больницинчи хăйĕн ĕç пӳлĕмĕнче кĕтсе илчĕ. Вăл ун чухне кунта хирурги уйрăмне те ертсе пыратчĕ. Пӳлĕмĕ иккĕмĕш хутраччĕ: пысăк, çутă, тирпейлĕ. Эпир пурте вырнаçса ларсассăн вăл пире тимлĕн-тимлĕн пăхса çаврăнчĕ. Хай çӳллĕ мар, тĕреклĕ пӳ-силлĕ, çӳçне хыртарнă, чăмăр питлĕ те хăмăр куçлă – утмăлалла çывхарать пек туйăнчĕ.

«Манăн çамрăк тусăмсем, юлташсем, – васкамасăр, йăвашшăн пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне. – Сире институтран ăнăçлă вĕренсе тухса Чăваш çĕршывне килсе çитнĕ ятпа саламлатăп. Эсир хирургăн йывăр профессине суйласа илнĕ. Çак утăма тата хăвăр ирĕкпе, хăвăр чун хавалĕпе турăр. Эсир çамрăк пулни – пысăк телей, сирĕн пурте-пурте

ĔМĔР САККИ

малашлӑхра. Канаш паратӑп, профессири йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме вӗренӗр, пуҫа ан усӑр, хӑвӑра хӑвӑр алӑра тытма пӗлӗр. Тӗрлӗ кӗтменлӗхсене, ыйхӑсӑр каҫсене хӑнӑхса пырӑр, пострисалтак пек пулӑр. Мӗн чухлӗ вӑй-хӑват, чӑтӑм-тӳсӗм кирлӗ сире! Сирӗн кулленхи ӗҫпе ҫын сывлӑхӗ ҫеҫ мар, ҫыннӑн пӗтӗм пурнӑҫӗ ҫыхӑннӑ.

Халӗ сире, ҫамрӑк тусӑмсем, кӑштах савӑнтарас тетӗп, – ӑшшӑн кулса, сӑнӗпичӗпе ҫуталса кайрӗ вӑл. – Ҫак кунсенче республика больницинче виҫӗ хутлӑ хирурги корпусӗ ӗҫе кӗрет. Унта сире вӗренме мӗнпур майсем туса панӑ, пурӑнмашкӑн хӑтлӑ пӳлӗмсем те хатӗрленӗ. Ыран ирхине сакӑр сехетре ҫак пӳлӗмрех пухӑнатпӑр, вӗренме пуҫлатпӑр...

Малтанхи кунсенчех Игнатий Максимович пире ҫӗнӗ корпуса ӗҫлеме килекен паллӑ хирургсемпе паллаштарчӗ. Кусем – чӑвашсен паллӑ писателӗ Куҫма Ильич Пайраш уролог, виҫӗ хутчен Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗ илнӗ, медицина службин полковникӗ Григорий Георгиевич Добров, Тӑван ҫӗршывӑн аслӑ вӑрҫине хутшӑннӑ Николай Ананьевич Ананьев травматолог, тин ҫеҫ Мускавра кӑкӑр хирургийӗ енӗпе клиника ординатурине пӗтернӗ Виктор Игнатьевич Кузнецов т.ыт. те. Унтан вӑл Чӑваш Республикинчи хирурги аталанӑвӗн историйӗ, ҫак ӗҫре чапа тухнӑ Н.С.Петров (Шупашкар), К.В.Волков (Етӗрне), Н.А.Геркен (Сӗнтӗрвӑрри), М.В.Покровский (Улатӑр), П.С.Кафтанников (Ҫӗмӗрле), И.Е.Виноградов (Ҫӗрпӳ, Ҫӗнӗ сала) хирургсен пӗлтерӗшӗ ҫинчен тӗплӗн каласа кӑтартрӗ. Мӗн тери ӑшӑ ҫын! Эпир, ҫамрӑк специалистсем, пӗрремӗш кунхи тӗл пулуранах ӑна юратса пӑрахрӑмӑр, унран уйрӑлас та килмерӗ. Вӑл пирӗншӗн таса кӑмӑлпа тӑван атте пек тӑрӑшатчӗ. Пирӗнтен пур енчен те хӑйне тивӗҫлӗ вӗренекен тупассишӗн ҫунатчӗ. Паллах, ҫакӑ тӑватӑ уйӑхра вӑл пире пур енчен те тӗрӗслерӗ. Астӑватӑп, йывӑр чирлӗ ҫынпа тӗл пулмассерен эпир шикленсе ӳкнине, иккӗленме пуҫланине тӳрех асӑрхатчӗ. «Ҫамрӑк тусӑмсем, хӑвӑр тӗллӗн ӗҫленӗ вӑхӑтра, уйрӑмах юнашар аслӑрах юлташ ҫук чухне, ҫухалса ан кайӑр, сехӗрленсе ан ӳкӗр, лӑпланӑр та тимлӗрех пулӑр, – вӗрентетчӗ Игнатий Максимович. – Сире институтра вӗрентнӗ пек, кунта, пирӗн больницӑра, мӗн ыррине лайӑххине курма ӗлкӗрнӗ пек васкамасӑр тӑвӑр ӗҫе. Эсир хыпаланни, эсир тунӑ йӑнӑш, хӑвӑра ытлашши шанни тата мӑн кӑмӑллӑх сывмар ҫын пурнӑҫне те ҫийӗ, сирӗн ята та варалама пултарӗ».

Ҫак сӑмахсене вӑл пире тахҫанхи ачалӑхри тата чи сывӑх юлташ пек чӗререн калатчӗ-ҫке-ха. Мӗн тери тӗрӗс пулнӑ вӗсем!

Тӗп хирургӑн ӗҫӗ калама ҫук тертлӗ, яваплӑ пулнине эпир куллен-кун хамӑр куҫпа куртӑмӑр. Кунӗ-кунӗпе ларса канма вӑхӑт ҫук. Операци тума районти больницӑсене самолетпа вӗҫсе каять. Хӑй ертсе пыракан уйрӑма та сывӑ мар ҫынсем пырсах тӑраҫҫӗ. Унсӑр пуҫне вун-вун ыйту татса памалла. Ҫав ҫулсенче районти больницӑсенчи хирургсен 55-60 процентӗ ҫак ӗҫре ҫур ҫул ытларах кӑна ӗҫлеме ӗлкӗрнӗ. Елчӗк, Комсомольски, Тӑвай, Хӗрлӗ Чутай тата Пӑрачкав районӗсенче кунашкал специалистсем пачах пулман. Кадр ыйтӑвӗсене ӑнӑҫлӑ татса парас тесе ӗнтӗ тӗп хирург ҫуллен хирурги енӗпе тӑватӑ уйӑхлӑх курссем йӗркелеме пуҫлать. Ҫак курссене вӑл ҫамрӑк хирургсен ҫеҫ мар, терапевтсемпе педиатрсене те, стоматологсене те явӑҫтарнӑ, вӗсем хушшинче хирургра ӗҫлеме кӑмӑл тӑвакан врачсене суйланӑ.

Мӗн калассипур, больницӑсенче операци сестрисем те ҫителӗклӗ пулман. Пурте кураҫҫӗ-ҫке: ӗҫӗ вут ҫинчи пек. Вӗсене суйласа илмелле, кашнинпе уйрӑммӑн калаҫмалла. Ҫапла вара тӗп

хирург Шупашкар хула больници çумĕнче операци сестрисен икĕ уйăхлăх курсĕсене те йĕркелесе ярать.

Игнатий Максимович хирургипе çыхăннă мĕнпур ыйтăва пысăк тимлĕхпе пăхнă. Район больницисенче хирурги уйрăмĕсем уçнă. Çамрăк хирургсене республикăри тĕп специалистсене явăçтарса онкологи, травматологи тата урологи енĕпе те ятарлă пĕлӳ, хăнăхусем пама тăрăшнă. Уйрăмах ялти больницăсенче хирургсем çирĕплетсе хăварас тĕлĕшпе хытă тимлетчĕ. Кăна эпĕ хамăн тĕслĕхпе те çирĕплетме пултаратăп.

Çавă тăвată уйăхлăх курссенче пулнă чухне мана республикăри онкологи диспансерĕн тĕп врачĕ П.Е.Ермолаев чĕнсе илчĕ. Çакă тĕлĕнмелле чаплă хирург çинчен мĕн ачаранах мĕн-мĕн илтмен-ши, мĕн кăна вуламан-ши? Вăл чĕрене операци тунине те пĕлнĕ. Паллă хирургпа питĕ килĕштерсе, уççăн калаçса лартăмăр. Вăл мана хăй патĕнче ĕçлеме юлмашкăн ыйтрĕ. «Çулталăк хушшинче эпĕ сана хам пĕлекен пур операцие те тума вĕрентетĕп, – сĕнчĕ вăл. – Мана хампа юнашар çамрăк та çаврăнăçуллă хирург кирлĕ. Ку тĕлĕшпе Вера Ефимова министрпа хамах калаçса татăлатăп».

Эпĕ ăна хама çапла шаннăшăн тав турăм. Вăл мана хурав пама та ытлашши васкатмарĕ.

Петр Ермолаевич çак ыйтупа тӳрех сывлăх сыхлав министерствин тĕп хирургĕ И.М.Кузнецов патне пынă. Игнатий Максимович, паллах, унпа питĕ кăмăллă калаçнă, анчах ыйтăвне тивĕçтермен. Мана вара чăтма çук хытă лекрĕ: тепĕр кун ирхине хăй пӳлĕмне чĕнсе илчĕ те тарăхсах калаçрĕ. «Мĕн, Николай Григорьевич, Тăвайĕнчен тухса тарма шутлатăн-и? – кусран тинкерчĕ вăл. – Пĕлетĕн вĕт, район тимиçе уйăх ĕнтĕ хирургсăр пурăнать. Ку енĕпе сывмар çынсене пурне те Канаша турттараççĕ. Пĕр тăхтамасăр, паянах Тăвайне вĕçтер!»

Эпĕ ăна Тăвайĕнчен ниçта та кайма шутламанни, больницăра мана чăтăмсăр кĕтни çинчен лăпкăн çеç ăнлантарса патăм. Куратăп, Игнатий Максимовичăн кăмăлĕ çемçелчĕ. «Николай Григорьевич, ан кӳренĕр мана, вată çынна, – хул пуççирен лăпкаса илчĕ вăл. – Эпĕ хĕрӳлленсе кайрăм, сасса та хăпартса калаçрăм. Çак районшăн манăн чун ыратать». Кăшт тăхтасан хушса хуларĕ: «Ан кулянăр. Сирĕн пурте малашлăхра. Шупашкарта ĕçлеме те ĕлкĕретĕр-ха. Халĕ çак больницăрах ĕçлĕр, пулăшăр Тăвай çыннисене. Унта лайăх çынсем пурăнаççĕ. Ĕçре мĕнле те пулин йывăрлăхсем сиксе тухсан, ан вăтанăр, талăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те манпа çыхăнăр. Эпĕ сире инкекре хăвармастăп».

Тĕп хирургăн сăмахĕсем чĕрене пырса тиврĕç. Эпĕ ăна Тăвайĕнче хам мĕн чухлĕ кирлĕ пулатăп, çавăн чухлĕ ĕçлеме сăмах патăм. Вара унпа ашшĕпе ывăлĕ пекех уйрăлтăмăр. Ун хыççăн эпир Тăвайĕнче те, Шупашкарта та, вĕсен патĕнче, яланах чи çывăх тăвансем пек тĕл пулаттăмăр. Малашнехи çулсенче те иксĕмĕр хушăмăрти ырă туйăм, ăшă туртăм вăйланнăçем вăйланса пычĕ.

Пурăнасса вăл Шупашкарти Винокуров урамĕнчи пĕр хутлă йывăç çуртра мăшăрĕпе Поликсена Антоновнăпа пурăнатчĕ. Паян, паллах, çак урам та, Игнатий Максимовичсен пӳрчĕ те çук ĕнтĕ. Кунта ку чухнехи пысăк çуртсем ӳссе ларчĕç.

Игнатий Максимович пысăк чунлă, ăш пиллĕ, кӳренĕве хăварт манакан çынччĕ. Çын пирки нихçан та усал шухăш тытман, çирĕп ыйтма та, каçарма та пĕлнĕ. Манăн çакăнтах унăн ырă кăмăлĕ çинчен те каласа хăварассăм килет.

Тăвай район больницинче виçĕ çул ĕçленĕ хыççăн манăн хирурги енĕпе клиника ординатуринче вĕренме шухăш çуралчĕ. Çакăн çинчен чи малтан республика тĕп хирургне, унтан сывлăх сыхлав министрне В.Г.Ефимовăна пĕлтертĕм. Ун

чухне эпĕ хирургра çеç мар, район больницин тĕп врачĕнче те ĕçлеттĕм. Мĕн тетĕр, Игнатий Максимович мана пур енчен те пулăшрĕ. Министрпа та тепĕр хут хăех канашларĕ, мана ординатурăна кĕме кирлĕ хутсем хатĕрлерĕ.

Чи тĕлĕнмелли каярахпа пулчĕ. Çулĕ çитсен, тивĕçлĕ канăва кайнă чухне вăл республикăри сывлăх сыхлав министерствин тĕп хирургĕ пулма ман кандидатурăна суйласа илчĕ. Эпĕ ун чухне Хусанта хирургра ĕçлеттĕм. Ниепле те ăнланма пултараймарăм: мĕншĕн вăл ман çинче чарăнса тăнă? Ун чухне пирĕн республикăра пысăк квалификациллĕ хирургсем çителĕклех ĕçленĕ: унăн ывăлĕ В.И.Кузнецов, медицина наукисен кандидачĕ Г.И.Малов, В.В.Иванов (Шупашкар), П.Е.Кулаков (Çĕмĕрле), А.М.Павлов (Çĕрпӳ) т.ыт. те.

– Мĕншĕн мана суйласа илтĕр? – тӳртен ыйту патăм ăна. Игнатий Максимович пĕртте шухăшласа тăмарĕ: «Пур, пур пирĕн ăста специалистсем, ăслă-тăнлă ачасем, квалификациллĕ хирургсем, – терĕ вăл. – Кашнине яваплă ĕç шанса панă, туслă пурăнаççĕ, пĕр-пĕрне килĕштерсе ĕçлеççĕ. Енчен те вĕсенчен хăшне те пулин тĕп хирурга лартсан, юлташсем хушшинче хирĕçӳ, кĕвĕçӳ пуçланать. Манăн кун çинчен илтес килмест. Тепĕр енчен тата сирĕн ĕçе пирĕн республикăри хирургсем аван пĕлеççĕ: Тăвайĕнче, Канашра вăй хутăн. Ученăй, медицина ăслăлăхĕсен кандидачĕ, ятсум çителĕклĕ. Хирурги енĕпе клиника ординатурине пĕтертĕр, кардиохирурги енĕпе специализацие çӳрерĕр...»

Çапла вара Игнатий Максимовичăн ырă пилĕпе эпĕ те çĕнĕ ĕçе кӳлĕнтĕм.

Ырми-канми çынччĕ вăл. Тытнă шухăша ялан пурнăçлатчĕ, панă сăмаха çирĕп тытатчĕ. Тăванĕсемпе, юлташĕсемпе пĕр килти пек туслă, килĕштерсе пурăннă. Врач çулĕ те çăмăл пулман унăн. Пĕр сăмахпа каласан, тĕлĕнмелле пурнăç, тĕлĕнмелле кун-çул...

Игнатий Максимович Кузнецов 1898 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнче хальхи Куславкка районĕнчи Анчăкассинче çуралнă. Ашшĕ-амăшĕ çĕр ĕçĕпе пурăннă. Ашшĕ – Максим Алексеевич кĕрхи-хĕллехи уйăхсенче ямшăкра та çӳренĕ. Амăшĕ – Дарья Ивановна кил-çуртри пĕтĕм ĕçе йĕркелесе ертсе пынă. Хуçалăхра виçĕ лаша, икĕ ĕне, сурăхсем, хур-кăвакал, чăх-чĕп тытнă. Сад пахчинче пыл хурчĕсем 30 вĕллене яхăн пулнă.

**И.М.Кузнецовăн пиччĕшĕн ывăлĕ Иван Петрович Кузнецов («СССР сывлăха сыхлас ĕç отличникĕ», 46 çул врачра ĕçленĕ) каласа парать:**

*– Дарья Ивановна – Тĕрлемессем, Кореньковсен йăхĕнчен пулнă. Анчăкассине унăн пиччĕшĕсенчен пĕри – Алексей Иванович час-часах пырса çӳренĕ. Унăн ывăлĕ вара – пурте пĕлекен Гаврил Алексеевич Кореньков – чăвашсен çыруллă поэзине пуçаракансенчен пĕри, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Паллă ăсчах, педагог, куçаруçă.*

*Тĕп килти виçĕ çемьере 18 çын пурăннă пулин те Дарья Ивановна пур ĕçе те тума ĕлкĕрнĕ, ачасене ĕçе хăнăхтарнă, ял-йыша хисеплеме вĕрентнĕ.*

Вĕсен çемйинче тăватă ывăлпа икĕ хĕр çитĕннĕ... Йăкăнат кил-хуçалăхра пур ĕçе та пĕлнĕ, лашасене пăхнă, уй-хир ĕçĕсене хутшăннă. Мăнкунта çăпатине салтса чăлана лартнă та пукравччен сырман. Çу каçа çарран чупнă, ура тупанĕ те калуш тĕпĕ пек картланса, хытса ларнă. Çулĕ çитсен ялти шкула каять. Ашшĕ ăна учителе е çĕр йĕркелӳ ĕçне вĕрентсе кăларма шухăшланă.

1913 çулта Йăкăнат Туканашри шкултан вĕренсе тухать. Тăванĕсем ăна малалла ăс пухма Чĕмпĕрти чăваш шкулне илсе каяççĕ. Вĕренӳ кал-кал пырать. Тăватă çул пĕлӳ илнĕ хыççăн Игнатий Кузнецов Хусана куçать, аттестат илмелли курссенче вĕренет. Çав çулах аттес-

тат илет те Хусан университечĕн медицина факультетне кĕме экзаменсем тытать. Шел, балсем çитеймеççĕ, ĕмĕтленнĕ ĕмĕт пурнăçланмасăр юлать. Каччă Хусантан тăван ене, Шупашкараваскать. Йĕркеллĕ апат та çиеймен вăл, лăпкăн çывăрма та пултарайман. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле Игнатий Максимович Çĕрпӳ çывăхĕнчи пĕр яла учительте ĕçлеме вырнаçать. Икĕ çул ачасене вĕрентет, хăй те врач пулас ĕмĕте пăрахаймасть, экзаменсене хатĕрленет. 1919 çулхи кĕркунне вăл çак экзаменсене ăнăçлă тытать, пысăк конкурс витĕр тухса Хусан университетĕнчи медицина факультечĕн студенчĕ пулса тăрать.

Пурнăçăн хăйĕн кукрашкисем çав. Çĕршывра граждан вăрçи пырать. Игнатий Кузнецов студент хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара çырăнать те эрне хушшинче саманан кĕрлесе çунакан кăмакине вирхĕнсе кĕрет, юнлă çапăçусене хутшăнать, шуррисемпе çапăçать. Çулталăкран каялла Хусана таврăнать, салтак шинелĕпех университета çӳреме пуçлать. Лекцисем итлет, анатомичкăна вĕçе-вĕçĕн хутлать, клиникăран туха пĕлмест.

Вĕренӳ çулĕсем хăвăрт иртеççĕ. 1924 çулта И.М.Кузнецов алла диплом илсе Чăваш çĕршывне килет. Сывлăх сыхлавĕн комиссариачĕ ăна Етĕрнери хирурги тата куç чирĕсене сиплекен больницăна Ĕç Геройĕ Константин Васильевич Волков патне иккĕмĕш хирург пулса ĕçлеме ярать. Çамрăк врач хăйне калама çук телейлĕ туять: ун чухнехи кашни хирургах К.В. Волков патĕнче ĕçлесе вĕренме ĕмĕтленнĕ. Çак кунсем тата уйрăмах Волков çинчен каярахпа Игнатий Максимович çапла аса илнĕ: *«Константин Васильевич ун чухне пирĕн çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери чи паллă хирургсенчен пĕри шутланнă. Çав вăхăтра Етĕрнери пĕчĕк çеç больницăра темиçе тĕрлĕ питĕ кăткăс операцисем тунă. XX ĕмĕрти çирĕммĕш çулсенче кунашкал операцисене Мускаври, Санкт-Петербургри, Хусанти, Чулхулари, Киеври тата Харьковри хирурги клиникисенче кăна тума пултарнă. Çавăнпа пĕрлех К.В.Волков нумай енлĕ аталаннă çын пулнă. Хирург ĕçĕнчен пушă чухне сăвăсемпе пьесăсем çырнă, наука ĕçĕнче те çитĕнӳсем тунă. Сцена çинче юрланă, спектакльсенче вылянă. Пушкина, Лермонтова, Толстоя нумай вуланă. Л.Н.Толстой пурăннă чухне ăна хăй çырнă кĕнекесенчен нумайăшне парнелесе хăварнă»*.

И.М.Кузнецов Етĕрнери больницăра 1924-1926 çулсенче ĕçлет. К.В.Волков иртсе пынипе ĕçлеме ăна питĕ килĕшнĕ. Унпа юнашар вăл малалла та ĕçлеме пултарнă, анчах пĕр операци вăхăтĕнче кĕтмен пăтăрмах пулса иртнĕ. Кун çинчен Игнатий Максимович хăй каласа панăччĕ.

*«Чип-чипер çуллахи кун тăрать. Эпир Чулхула облаçĕнчен илсе килнĕ 35 çулти хĕрарăма операци тума хатĕрлерĕмĕр. Ăна пĕсехе парĕн шыççи сывлама чăрмантаратчĕ. Операци вăхăтĕнче К.В.Волков хăйĕн пулăшаканĕ пулма мана хушрĕ. Акă операци пуçланчĕ: Константин Васильевич хăйне хăюллă тытать, яланхи пекех хăвăрт, çаврăнăçуллă ĕçлет. Пурте йĕркеллĕ. Тĕп артерисене пурне те палăртса çыхса хунă ĕнтĕ, сулахай енчи аялти артерипе тăрмашатпăр. Ăна та ыттисем пекех уйăрса хутăмăр. Кирлĕ çĕртен хĕскĕчсемпе хĕстертĕмĕр. Шăп çакăнта эпир кĕтмен çĕрте инкек сиксе тухрĕ: артери çинчи пĕр хĕскĕчĕ вĕçерĕнсе кайрĕ...*

*Пĕр самантрах пурте юн айне пултăмăр. Суран çине те юн хăвăртах юхса тулчĕ. Артерирен юн тапакан вырăна та пĕлме май çук. Артерие хĕскĕчпе хĕстерме хыпаланатăп, нимĕн те пула пĕлмест. Хĕскĕчĕ «пĕсехе парне» лекет те лешĕ татăлать, юнĕ тата вăйлăраххăн пĕрĕхет. Пуçра шухăш вылять: «Хирург пуçне çухатсан, сывмар çын пурнăçне*

*çухатать». Эпĕ çухалса кайрăм. Сестрасем те çав самантра сывмар çыннăн юн пусăмĕ ÿкни çинчен пĕлтерчĕç. Эпĕ хумханнине тата ним тăвайманнине кура Константин Васильевич туххăмрах сĕтел çинчен тепĕр хĕскĕч илчĕ те артерие васкамасăр хĕстерсе хучĕ, юна юхма чарчĕ. Мана темле питĕ çăмăл пулса кайрĕ. Юнашар тăракан Константин Васильевич малтанхи пекех çиçĕмле хăвăртлăхпа ман алăри хĕскĕче туртса илчĕ те пĕтĕм вăйпа алăк еннелле ывăтса ячĕ.*

*– Кай операцирен! – кăшкăрчĕ вăл. – Санран нихçан та хирург пулмасть!*

*Ăнланăр эсир мана, тĕрĕс ăнланăр. Эпĕ чунтан хисеплекен çывăх çын сăмахĕсем-çке вĕсем! Эпĕ хăраса ÿкрĕм. Мĕн тумалла? Пĕтĕмпе пăрахмалла та операци пÿлĕмĕнчен тухса каймалла-и?*

*Пурте шăпланчĕç. Волков та чĕнмерĕ. Сестрасем сывмар хĕрарăма юн ярас тĕлĕшпе аппаланчĕç-ха. Кунта пĕрпĕринпе вăрçăнма вăхăт çуккине те ăнланчĕç вĕсем. Юнĕ те виçĕ-тăватă çеккунтран мала сирпĕнмерĕ пуль – хĕрарăм веçех шуралса кайрĕ.*

*«Çук, – шухăшлатăп, – тухса кайма юрамасть. Хирургсем апла тумаççĕ. Операци сĕтелĕ çинче чĕрĕ çын выртать-çкеха!» Эпĕ хам вырăнтах юлма йышăну турăм.*

*Операци малалла пырать. Халĕ операци сĕтелĕ умĕнче хăлхасăр-чĕлхесĕр çынсем тăраççĕ тейĕн. Алăсем кăна выляççĕ. Сестра хирурга, унăн аллипе пÿрнисен хусканăвĕсене пăхса, ĕç хатĕрĕсем парса тăрать. Часах медсестрасем выртакан хĕрарăмăн артеринчи юн пусăмĕ çĕкленнине, юн таппи йĕркене кĕнине пĕлтерчĕç те Константин Васильевич питне сăн кĕчĕ. Вăл кăштах çемçелчĕ. Эпĕ те лăплантăм. Ăна хăюллăраххăн пулăшма тытăнтăм. Çапах та операци вĕçленичченех пĕртте чĕнмерĕмĕр. Сĕтел çинчи хĕрарăм та наркозран вăранчĕ... Çакна каласа хăвармалла, унăн операци хыççăнхи тапхăр та ăнăçлă иртрĕ, вăл сывалса çитсех киле кайрĕ.*

*Волковпа иксĕмĕр хушăри хутшăнусем пачах улшăнмарĕç. Пĕр кун иртрĕ, иккĕ. Эрне те иртрĕ. Константин Васильевич манпа çав-çавах калаçмасть. Мана операци тума та чĕнмест. Ăнланатăп, Волков манран сивĕнмеллипех сивĕннĕ. Пусĕпех. Çапах та мĕн те пулин тумалла-çке-ха. Сывлăх сыхлавĕн халăх комиссариатне çыру çырса ятăм, хама пĕр-пĕр район больницине хирурга ĕçлемешкĕн куçарма ыйтрăм. Анчах та мана хирурга лартмарĕç, васкавлăн Шупашкара чĕнсе илчĕç те – халăх комиссарĕн сиплев енĕпе ĕçлекен çумĕ пулма çирĕплетрĕç. Паллах, кунашкал утăма К.В.Волковпа канашламасăр тума пултарайман. Мĕншĕн тесен çав çулсенче республикăра пĕтĕм хирурги ĕçĕсене вăл тытса йĕркелесе пынă, унăн кашни сăмахне пур шайра та шута илнĕ. Çавнашкал пысăк ĕç шанса пани мана та тĕлĕнтерсе ячĕ. Халĕ манăн республикăри хирурги ĕçне те тимлесе тăмалла-çке! Çав хушăрах хама хирург ĕçĕнчен айккине пăрни питĕ тарăхтарчĕ. Çакă манăн кăмăла кулленкун пусарса тăчĕ. Эпĕ чĕре ыратма пуçличченех пăшăрхантăм».*

Республикăри сывлăх сыхлавĕн халăх комиссариатĕнче 1926-1927 çулсенче икĕ çул ĕçленĕ хыççăн И.М.Кузнецов хайне хирурги енĕпе клиника ординатуринче вĕренмешкĕн Хусана яма путевка ыйтать. Унăн ыйтăвне тивĕçтереççĕ. 1927 çулхи кĕркунне ăна Хусанти медицина институтне, пĕтĕм çĕршывĕпе паллă профессор-хирург Л.В.Боголюбов ертсе пыракан факультативлă хирурги кафедрине, йышăнаççĕ. Ординатурăра вăл 1927-1930 çулсенче вĕренет, хирургири çĕнĕлĕхсемпе тĕплĕн паллашать, нумай енлĕ кăткăс операцисем тума хăнахать.

Ординатура пĕтернĕ хыççăн Игнатий Максимович Шупашкара таврăнать. Сывлăх сыхлавĕн халăх комиссариатĕн-

че, унăн ĕçе йĕркелесе ертсе пырас пултарулăхне тата хирурги енĕпе пухнă пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсене шута илсе, ăна Шупашкар хула больницин пуçлăхĕ пулма тата çав больницăрах хирурги уйрăмне ертсе пыма çирĕплетеççĕ. Çакăн чухне вăл пĕрремĕш хут пысăк йыша ертсе пыма мĕн тери йывăр пулнине туйса илнĕ. Ун умĕн çак больницăна 27 çул хушши пĕр улшăнмасăр çĕршыври паллă хирургсенчен пĕри, медицина наукисен докторĕ тата Ĕç Геройĕ Н.С.Петров ертсе пынă. Анчах та Игнатий Максимович та çухалса кайман, вăйне шанса коллектива ăнăçлă ертсе пынă, хăй те кăткăсран та кăткăсрах операцисем тума пуçланă.

1935 çулта И.М.Кузнецов Шупашкар хула больницин никĕсĕ çинче пирĕн республикăра пуçласа юн илекен станци уçать. Ун хыççăнах васкавлă медицина пулăшăвĕн станцине те йĕркелесе ярать.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пынă çулсенче Игнатий Максимович хăйĕн пултарулăхĕпе ăсталăхне, уйрăмах чăн-чăн çынлăхне пур енлĕн кăтартса парать. Тепĕр чухне талăкĕпе пĕр самант та ирĕклĕн сывласа илме май килмен-çкеха. Хĕрĕх пĕрремĕш çулхи августрах пирĕн республикăна хамăрăн аманнă салтаксемпе офицерсене турттарса килме пуçлаççĕ. Хуласемпе ялсенче 18 эвакогоспиталь уçаççĕ. Вĕсене врачсемпе, медсестрасемпе тивĕçтермелле. Операци тунă вăхăтра куç та куç кирлĕ, тимлесех тăмалла, консультаци памалла. Ытти чир-чĕр мĕн чухлĕ: шатраллă тиф, вархырăм пăсăлни, чахотка, трахома, дистрофи...

Çак эвакогоспитальсенче вăрçă çулĕсенче пин-пин офицерпа салтак сипленнĕ. Вĕсенчен 72,3 проценчĕ тепĕр хут строя таврăннă.

Эх, пурнăç! Пурăнан пурнăçра мĕнмĕн курман Игнатий Максимович... Калаçăва та пит ăстаччĕ вăл. Итлетĕн-итлетĕн те ăна, аптраса ларатăн: те кулянмалла, те кулмалла? 1960 çулта Тăвайĕнчи больницăра хăйпе пулса иртни çинчен каласа панăччĕ.

*«1943 çулхи çулла. Çĕрле 11 сехет тĕлнелле мана больницăна чĕнеççĕ: кăкăртан çĕçĕпе чикнĕ йĕкĕте илсе пынă. Операци тумалла!*

*Каччă каçхи сменăран тухса килсе васканă-мĕн. Çул çинче ăна палламан çынсем чарнă, укçа пама ыйтнă. Кун укçи пулман, лешсенчен пĕри ăна çĕçĕпе чашлаттарнă. Çĕççи ӳпкене лекнĕ, юн нумай кайнă...*

*Йĕкĕте операци турăм: ӳпки çинчи суранне сапларăм та юнне юхма чартăм, кăкăрти сурана та çĕлесе хутăм. Аманнă çын сывлăхĕ йĕркеленнине кура киле кайма тухрăм.*

*Ирхине виçĕ сехет ĕнтĕ. Эпĕ больницăна та, киле те ялан пĕр çулпа – Чебоксарка юхан шывĕ хĕррипе тухса Нижегородски урамĕпе – çӳретĕп. Килĕм – юнашарах. Пĕчченех утатăп. Урамра темшĕн пĕр хунар та çунмасть. Юхан шыв хĕррине анма çеç ĕлкĕртĕм – ман ума виçĕ улăп сиксе тухрĕ: çӳллĕ, тĕреклĕ çан-çурăмă, анчах япăх çи-пуçлă. Пĕри тӳрех командир пек кăшкăрма пуçларĕ: «Хывăн хăвăртрах!»*

*Эпĕ самантлăха çухалса кайрăм. Чарăнса тăтăм та мĕн тумаллине пĕлместĕп: «Ачасем, эсир мана урăх çынпа пăтраштаратăр пуль, – тетĕп. – Эпĕ – Кузнецов хирург. Тин çеç кăкăрĕнчен çĕçĕпе чикнĕ йĕкĕте операци турăм та ывăнса çитрĕм. Киле утатăп».*

*– Нумай пакăлтататăн, – кун ертӳçи пулчĕ пулас, каллех хуçаланчĕ манпа. – Эпир нихçан та, никама та пăтраштармастпăр. Хыв костюма! Мĕн кĕтетĕн? Мĕн, пит-куçна илемлетмелле-и?*

*Ăнлантăм, кусенчен ыррине кĕтсе илме çук, вĕсен ман тумтире сутса укçа тумалла. Пиншака хыврăм та çакскере алăранах тыттартăм. «Шăлавара», – тет. Шăлавара хыврăм та ун ури айне*

*ывăтрăм. Ку вĕсене килĕшмерĕ. Мăкăртатса илчĕç. «Кĕпӳне!» – кăшкăрать çавах. Ăна галстук, кĕпе тыттартăм. Тăратăп. Халĕ текех хывмалли çук ĕнтĕ. Трусси çеç. Анчах ăна ыйтмаççĕ. Шухăшлатăп, кусен пуçне пĕр-пĕр усал шухăш пырса кĕриччен кунтан хăвăртрах тармалла тетĕп. Темиçе утăм çеç турăм, çурăм хыçĕнче тискер сасă янăраса кайрĕ: «Чарăн!» Чарăнса тăтăм. Шухăшлатăп, тата мĕн тăваççĕ-ши мана тетĕп. Чĕнместĕп. Сăмах калама та хăратăп. Халĕ труссине хывтараççĕ-ши? Илтетĕп: «Мĕн тăратăн? Сехете салт». Сехете салтрăм та ыйтакана тыттартăм. Манран мăшкăлласси вĕçĕ-хĕрри пулмассăн туйăнса кайрĕ. Мĕн тери кӳрентереççĕ. Шуйттан илесшĕ, операци хыççăн ку кăна çитменччĕ мана. «Эх, Кузнецов, камран хăратăн? – вĕçрĕ шухăш. – Эсĕ хирург вĕт».*

*Чăн та, манăн çухатмалли ним те çук. Самантрах хама хам алла илтĕм. «Ачасем, манпа тĕрĕс мар тăватăр, – хыттăнах каларăм. – Эпĕ – хирург! Сирĕн касăлнă-аманнă çынсене вилĕмрен сахал мар çăлнă. Паян вара мана лайăх урок патăр. Ӳлĕмрен сирĕн пеккисене çăлма пĕр утăм тумастăп. Йытă евĕр вилĕр. Шанса тăрăр, хамăн сăмаха тытатăпах». Хам мĕн каланинчен хам хăраса ӳкрĕм: çапса пăрахаççĕ те шыва ывăтаççĕ. Алла султăм та килелле утрăм. Çавăнтах хаяр сасă хăрăлтатрĕ: «Хăвăртрах таврăн!» Шухăшлатăп, халĕ мĕн пулмалли тинех пулать ĕнтĕ. Чарăнтăм та вĕсен енне çаврăнтăм. Куратăп, пĕри аллине тăснă: «Тыт сехете, чуп кунтан. Халĕ эпир те хамăра хамăр шанмастпăр!» Хăранине çĕнтертĕм, темиçе утăм туса сехете илтĕм те малалла чупса кайрăм. Каялла çаврăнса пăхрăм, вĕсем курăнмарĕç.*

*Савăнтăм, урамра мана никам та тĕл пулмарĕ. Килте арăм та кĕтсе илмерĕ, çывăрать. Ирхине ăна мĕн пулса иртни çинчен пĕлтертĕм те вăл аптрасах ӳкрĕ. Васкавлă пулăшу чĕнме лекрĕ».*

*Хăй сăмахне вĕçлерĕ те Игнатий Максимович хавассăн кулса ячĕ. Куласса вăл хитре кулатчĕ, тӳрех хушса хучĕ: «Ку пурте мар-ха. Чи интересли – малта.*

*Мана хывăнтарса çаратнăранпа икĕ эрне иртрĕ. Ун çинчен ĕнтĕ пĕтĕм хула шавлать. Тăвансем, юлташсем, паллакансем те, палламансем те шăнкăравлаççĕ, больницăна кĕрсе çӳреççĕ.*

*Пĕррехинче, çапла, ир-ирех ĕçе пытăм. Ман пата тӳрех медсестрасем чупса кĕчĕç, сĕтел çине пысăк çыхă хучĕç. Çиеле «Кузнецов хирурга» тесе çырнă. Мĕн ку?*

*Мĕн пулать те мĕн килет тесе çак çыхха салтатăп. Хам куçа хам ĕненместĕп: ман умра тăрăшса якатнă костюм, кĕпе тата галстук выртать. Кĕске çыру та пур: «Кузнецов тухтăр, каçхи спектакльшĕн пире каçар. Пирĕн патра çав каç эсир манса хăварнă япаласене веçех тавăрса паратпăр. Сывлăхлă пулăр. Сирĕн каçхи юлташсем».*

*Игнатий Максимович тепĕр хут хавассăн кулса ячĕ. «Хирург пурнăçĕнче мĕн кăна пулмасть пуль», – терĕ вăл лăпкăн-лăпкăн...*

И.П.Кузнецов каласа парать:

– Игнатий Максимович вăрçă çулĕсенче те, кайран та ял-йыша пĕртте манăçа хăварман. Темиçе сехетлĕхе те пулин килсе каятчĕ. Хĕрĕх иккĕмĕшĕнче 84 çулти амăшĕ çĕре кĕчĕ. Виçĕ çултан манăн атте куçне хупрĕ. Мĕн тумалла? Эпĕ вун çиччĕри йĕкĕт кил пуçĕ пулса тăтăм. Анне инвалид. Аппа институтра, йăмăк шкулта вĕренет. Эпĕ те вуннăмĕш класа çӳретĕп. Халĕ вĕренме пăрахмалла-и? Игнатий Максимович хытă пулăшрĕ, алла аттестат илсе аслă шкула вĕренме кĕме те канаш пачĕ. Мединститутра вĕреннĕ çулсенче те ăна яланах юнашар пекех туйнă. Ун чухне хăйĕн çемйинче те пысăк йывăрлăхсем пурччĕ: Шупашкарта пӳрт

лартатчĕ, икĕ ывăлĕ Хусанти аслă шкулсенче вĕренетчĕ.

*1941-1942 çулсенчи хĕллехи сивĕ уйăхсенче пирĕн ялти улмуççисем пĕтĕмпех шăнса хăрса пĕтрĕç. Тепĕр çултан Игнатий Максимович Мичуринск хулинче командировкăра пулнă. Унтан вăл ял-йыш валли пысăк парне –150 тĕп улмуççи илсе килчĕ. Ял пурнăçĕ тĕпрен улшăнчĕ-çке!*

*1946 çулта И.М.Кузнецов пуçарнипе Шупашкар хула больници хула çыннисемпе пĕрле çывăхри ялсенчи сыв мар çынсене те сиплемешкĕн йышăнма тытăнать. Урăхла каласан, республика больницин тивĕçĕсене илет. Çак никĕс çинче вара республикăри онкодиспансер (тĕп врачĕ П.Е.Ермолаев) уçăççĕ.*

*1947 çулта Чăваш АССР Сывлăх сыхлавĕн министерстви Шупашкар хула больниципе (ертӳçи И.М.Кузнецов) хула поликлиникине (ертӳçи П.Н.Осипов) пĕрлештерсе республика больници туса хураççĕ. Унăн ертӳçи пулма П.Н.Осипова лартаççĕ. Игнатий Максимович пĕрлештернĕ больницăра хирурги уйрăмне ертсе пырать. 1949 çулта ăна Чăваш АССР Сывлăх сыхлав министерствин тĕп хирургĕ пулма уйăрса лартаççĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл республика больницинчи хирурги уйрăмĕн ертӳçинче те ĕçлет.*

*Игнатий Максимович ăслăлăх ĕçĕнче те хастарлă пулнă. 1943 çулта вăл «Эндемический зоб в Чувашской АССР» темăпа кандидат диссертацийĕ хӳтĕлет, ăна медицина ăслăлăхĕсен кандидачĕн ятне параççĕ. Вăл 29 ăслăлăх ĕçĕ çырса пичетленĕ. Вĕсем хăйсен пĕлтерĕшне паянхи кунччен çухатмаççĕ.*

*Ăслăлăх ĕçне вăл çамрăк хирургсене те çине тăрса явăçтарнă. Унăн вĕренекенĕсенчен нумайăшĕ кандидат (З.Н.Волков, Г.И.Малов, П.Е.Кулаков) тата доктор (А.Н.Волков, Н.Г.Григорьев, Ф.Г.Григорьев) диссертацийĕсем хӳтĕленĕ.*

*Игнатий Максимович общество ĕçне те хастар хутшăннă: 1925-1927 çулсенче ăна Етĕрне хула Советне, 1955-1959 çулсенче Чăваш АССР Аслă Советне депутата суйланă.*

Республикăра хирурги ĕçне аталантарма ырми-канми ĕçленĕшĕн И.М.Кузнецова икĕ хутчен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, «1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн аслă вăрçинчи Германие çĕнтернĕшĕн» медальпе, «СССР сывлăх сыхлавĕн отличникĕ» паллăпа наградăланă. «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕ», «РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ» хисеплĕ ятсем панă. Ăна Чăваш АССР юбилей Хисеп кĕнекине кĕртнĕ. Шупашкарта ача-пăча больници вырнаçнă районти çĕнĕ урама И.М.Кузнецов ятне панă.

Çапах та çакăнта пĕр сĕнӳ парса хăварас килет. Куславкка районĕ хăйĕн чаплă ывăлĕ-хĕрĕсемпе тивĕçлипе мухтанать. Хулара Н.И.Лобачевский музей-çуртĕнче Чăваш Енĕн пĕрремĕш тĕп хирургне И.М.Кузнецова халалласа уйрăм кĕтес уçсассăн питĕ лайăх пулĕччĕ. Вăл ăна тивĕçлĕ.

**Герман Желтухин журналист аса илет.**

*Иртнĕ ĕмĕрти аллăмĕш çулсен вĕçĕ. Çуркунне. Эпир, Туканашри çичĕ çул вĕренмелли шкул ачисем, пысăк тăхтав вăхăтĕнче урамра чупкалатпăр. Сасартăк тахăшĕ: «Самолет! Самолет! Укăлчара самолет анса ларчĕ!» – тесе кăшкăрса ячĕ. Ачасем хĕвĕшме пуçларĕç, урока ларма шăнкăрав пуласса пăхмасăрах, эх, чупаççĕ çырманалла. Унтан сăрта хăпарса çитеççĕ: укăлчара самолет саркаланса ларать. Самолета пурте тыткаласа пăхрăмăр. Пропеллерĕ айĕнче виççĕн тăраççĕ: пĕри летчик ĕнтĕ, иккĕшĕ питĕ таса тумланнă, пысăк пуçлăхсем пек туйăнчĕç.*

*– Пĕчĕкреххи, тĕреклĕ хул-çурăмли, пире алă çĕклесе саламлаканни – пирĕн ялсем, – паллаштарать пирĕнпе пĕрле вĕренекен Анчăкасси ачи Çтаппан Кольки.*

*– Игнатий Максимч теççĕ ăна. Хирург. Халĕ çуран пирĕн яла каçса килеççĕ вĕсем.*

*Самолет патне пĕтĕм шкул пухăнчĕ ĕнтĕ. Çакă Игнатий Максимович текенни пирĕн пата утса пычĕ.*

*– Ну, мĕнле пурăнатăр, ачасем? – уçă сасăпа ыйтрĕ вăл.*

*– Лайăх! – хуравларăмăр эпир.*

*– Мĕнле вĕренетĕр?*

*– Лайăх!*

*– Маттур! Çирĕп сывлăхлă пулăр! Хăвăртрах ÿссе çитĕнĕр. Хăвăрăн ырă ĕçсемпе тăван шкул ятне çÿле çĕклĕр, çĕршывĕпех чапа кăларăр... – çапла ырă сунчĕ пире ун чухне паллă хирург.*

*Анчăкасси ялĕ хăйĕн чаплă çыннисемпе пуян. Кунта яппун вăрçи паттăрĕ, виçĕ хутчен Георгий хĕресне илме тивĕçнĕ Григорий Тонин матрос çуралса ÿснĕ, Çемен Григорьев – Эсрел сăвăç малтанхи хайлавĕсене çырнă. Ял-йышра Игнатий Максимович Кузнецовăн ячĕ-сумĕ уйрăмах пысăк пулнă. Унăн тĕслĕхĕпе чи малтан Анфиса Артемьевна Симакова врача вĕренсе тухнă. Вăл Улатăр хула поликлиникинче тĕп врачăн çумĕнче ĕçленĕ, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕн хисеплĕ ятне илнĕ. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи хыççăнах Хусан çулне Иван Петрович Кузнецов, Юрий Никифоровичпа Михаил Никитич Ярисовсем, Геннадий Егорович Иванов (рентгенолог) тата нумай-нумай çамрăк врач вĕренме çÿресе такăрлатнă. Вĕсем пурте каярахпа хăйсен пархатарлă ĕçĕпе халăх хисепне тивĕçлĕ пулнă.*

Игнатий Максимович мĕн ачаранах тăван çут çанталăкăн çывăх тусĕ пулнă. Халĕ те Туканаш масарĕнче вăл ашшĕн вил тăприйĕ çине 1913 çулхи çуркунне лартса хăварнă мăнаçлă хурăн ăна асилтерет.

Игнатий Максимович Атăл леш енчи Кăкшăм тăрăхне питĕ юратнă. Чунне ирĕклĕх чĕннĕ, хитрелĕх илĕртнĕ. Вăл чаплă кăмпаçă пулнă. Çÿрессе те васкамасăр, лăпкăн çÿренĕ. «Кашни кăмпаçăн хăй çÿреме юратнă вăхăт пур, – çырнăччĕ Георгий Орлов поэт «Хитре сунар» очеркĕнче (Ялав, 1977, 5№, 10 с.). – Пĕрисем вăрмана каç выртмаллах каяççĕ, теприсем ирхине ирех е хĕвел çĕкленсессĕн тин. П.Н.Осипов драматург (вăлах прозаик, врач-терапевт) çулсеренех августра, Кăкшăмри кану çуртĕнче пурăннă чух, кăвак çутă киличченех Йăлăма тухса вăркăнатчĕ те ирхи апат тĕлне яланах туп-тулли карçинккапа таврăнатчĕ. И.М.Кузнецов хирург илĕм-тилĕм мар, тул çутăлсассăн кăна утатчĕ кăмпана, анчах вăл пĕччен çÿретчĕ (шухăшлама, сăнама, илемпе киленме кансĕрлекен çуккипе хăйне лайăхрах, ирĕклĕрех туйнă пуль ĕнтĕ вăл, кăмпа поэзийĕпе хăйне кирлĕ пек савăннă)».

И.П.Кузнецов каласа парать:

– Игнатий Максимович чăваш халăх юррисене питĕ килĕштеретчĕ. Илемлĕ сасăпа çăмăллăн, ĕненмелле юрлатчĕ. «Пирĕн урам анаталла», «Ăçта вĕçен, чĕкеç» юрăсене паян кун та Анчăкасси ялĕнче Игнатий Максимовича аса илсе янăратаççĕ. Çук, çитме çук çав ăстаçăна! Вăл юрланă чухне çан-çурăм сăрлатса каятчĕ, куç шывланатчĕ...

Игнатий Максимович 76 çул пурăннă, 1974 çулта вилнĕ.